25-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ЯНВАРЬ
5
ЫТЛАРИКУН
3(6240) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Январĕн 3-мĕшĕнче пирĕн наступлени тăвакан войскăсем, сасартăк пырса çапса, МОЗДОК хулипе чугунçул станцине, çавăн пекех тата МАЛГОБЕК хулине тытса илнĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Колхозниксен хĕллехи вĕренĕвĕ

Социализмлă ялхуçалăхĕн 1943 çулта фронтпа çĕршыва тата нумайрах тырпул, аш-какай, çăм, тир, сĕт-çу туса памалла. Çак задачăна чыслăн пурнăçлама пур колхозниксен те çĕрĕçĕнчи паха опытсене вĕренсе алла илмелле.

Колхоз кадрĕсем хăйсен ĕçне лайăх пĕлсе тăраççĕ пулсан, ялхуçалăхĕнче малта пыраканссен ĕç опычĕпе хĕçпăшалланнă пулсан, уйхирсенче те, фермăсенче те ĕçсем ăнăçлăрах пулса пыраççĕ, çавăнпа колхозлă ялхуçалăхĕ фронтпа çĕршыва нумайрах продуктсем, промышленноçа нумайрах чĕртавар туса пама пултарать. Вăрçă вăхăтĕнчи кăçалхи хĕл колхозниксемпе колхозницăсен хĕрÿ вĕренÿ вăхăчĕ пулса тăмалла. Çĕрĕç органĕсен тата МТС политотделĕсен колхозсенче çак ĕçе халех организацилесе пуçарса ямалла.

Колхозăн ăнăçлă ĕçĕ нумай чухне председательтен, бригада ĕçĕ — бригадиртан килет, вĕсен çынсене ĕçе мобилизацилеме, ĕç вăйне кирлĕ пек вырнаçтарма пĕлмелле. Çавăнпа та колхозсен ертсе пыракан кадрĕсене организациллĕ ĕçе вĕрентесси çине халь уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Пур колхозсен председателĕсем те, пур бригадирсемпе звеноводсем те, выльăх-чĕрлĕх фермисен заведующийĕсем те хĕл вăхăтĕнче хăйсен ĕçне тĕплĕн вĕренсе хатĕрленни кирлĕ. Кашни колхоз валли, бригадăсемпе звеносем валли ялхуçалăх ĕçĕсене тĕплĕн пĕлекен, ĕçе лайăх организацилесе пыма пултаракан кадрсем вĕрентсе хатĕрлесси—çĕрĕç органĕсен паянхи чыслă задачи пулать.

Иртнĕ çулсенче колхозниксен вĕренĕвĕнче ситменлĕхсем пулнă. Колхозсен ертсе пыракан кадрĕсене, председательсене, бригадирсемпе звеноводсене курссенче агротехникăн тĕп ыйтăвĕсене çеç вĕрентнĕ. Агротехника ыйтăвĕсене [illegible]

[illegible]

ма пултараççĕ.

Çĕрпÿ районĕнчи çĕрĕç пайĕ колхоз председателĕсен вĕренĕвне çакăн пек организациленĕ те. Районра колхоз председателĕсен семинарĕсене пурĕ пилĕк çĕрте уçнă. Малтанхи занятире колхозсен примерлă уставĕ тăрăх çирĕплетнĕ организациллĕ мĕйтусем çинчен вĕрентнĕ. Малашне вăл семинарсенче малта пыракан колхоз председателĕсем хăйсен опытне каласа параççĕ.

Элĕк районĕнчи райçĕрĕç пайĕ çак иртнĕ кунсенче колхозсене ертсе пырас ĕçе халь çеç тăнă председательсене пухса ситес çуракине хатĕрленмелли тата ăна ирттермелли организациллĕ ĕçсем çинчен вĕрентрĕ. Анчах, калас пулать, нумай районсенче колхозсен ертсе пыракан кадрĕсен вĕренĕвне халĕ те йĕркеллĕ организацилемен-ха. Уйрăм ыйтусемпе семинарсем туса ирттерни сахал, колхоз председателĕсене, бригадирсене агротехникăпа тата организациллĕ ĕçĕн мелĕсене вĕрентмелли курссем организацилемелле, вăл курссенче колхозсен ертсе пыракан кадрĕсене ялхуçалăхĕнчи ĕçсене йĕркелесе пыма тĕплĕн вĕрентмелле.

Хĕллехи вĕренĕве колхозăн ертсе пыракан кадрĕсене çеç мар, пĕтĕм колхозниксемпе колхозницăсене тата подростоксене те хутшăнтармалла. Кашни колхозрах агротехника тата зоотехника кружокĕсене уçмалла.

Иртнĕ çулсенче колхозниксен агротехникăна вĕренмелли кружокĕсенче вăхăта теорилле занятисемпе нумайрах ирттернĕ, çынсене вĕсем куллен тумалли ĕçе вĕрентесси, лайăх ĕç опычĕсене вĕренесси çине сахал çавăрăнса пăхнă. Çак йăнăшпа кăçал тумалла мар. Колхозниксемпе колхозницăсене тырпул тухăçлăхне ÿстерме пулăшакан агротехникăллă ĕçĕн майĕсене вĕрентмелле, вĕсене мĕнле организацилесе [illegible]

[illegible]

Аманнă боецсемшĕн ытларах тăрăшар

МОПР организацийĕсен вăрçă вăхăтĕнчи ĕçĕсенчен пĕри вăл — госпитальсене шефа илсе пулăшса тăрасси, аманнă боецсемпе пĕрмаях тăрăшасси пулать. [illegible]

Смирнова юлташ пуçарнипе МОПР членĕсем аманнă боецсем валли 1941 çулта 700 тенкĕлĕх парнисем илсе пачĕç. Октябрь уявĕнче Сталин Конституцийĕн кунĕсенче вĕсем шефа илнĕ госпиталь валли [illegible]

[illegible]

Г. ПЛАТОНОВ.

Боевой самолетсен „Комсомолец Чувашии“ ятлă эскадрильине тăвар

Чкаловски районри „РОКК“ колхозри комсомолецсемпе çамрăксем Чăваш республикин колхозĕсенчи, предприятийĕсенчи, учрежденийĕсенчи тата шкулĕсенчи комсомолецсемпе çамрăксене чĕнсе калани

Хаклă юлташсем!

Совет халăхĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç 18 уйăх ытла ĕнтĕ отечественнăй аслă вăрçă туса пырать. Юнлă çапăçусемпе тытăçусем пирĕн юратнă тăван çĕршывăн кунçулне татса параççĕ. Нимĕçсен фашистла çаратуçисем совет халăхĕпе унăн ирĕке юратакан çамрăкĕсене пĕтересшĕн, пусмăра кĕртесшĕн. Анчах та вăл пулаймĕ!

Совет халăхĕпе унăн Хĕрлĕ Çарĕ хăйсен тăван çĕршывĕн ирĕклĕхне, чыслăхĕпе никама пăхăнманлăхне нихăçан та, никама та памĕç. Эпир совет халăхĕпе унăн çамрăкĕсен пурнăçĕпе ирĕклĕхĕшĕн титлерла çаратуçăсене хирĕç тĕреслĕхлĕ тата, ирĕке кăларакан вăрçă туса пыратпăр. Хамăрăн кĕрешĕвĕн тĕреслĕхне курса тăни пирĕн вăйсене вунă хут ÿстерет. Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар фронтăн чылай участокĕсенче наступлениллĕ çапăçусем пуçласа ячĕ, тăшмана кашни кун çĕнĕрен те çĕнĕрен пырапыра çапать, унăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерет, эпир тăшмана çĕнтерес вăхăта çывхартать.

Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă воинĕсем нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç çакăн пек паттăррăн çапăçнине эпир, тылри боецсем, шанчăклăн пăхса тăратпăр. Эпир, Чкаловски районри «РОКК» колхозри комсомолецсемпе çамрăксем, тăван çĕршыва хĕрÿллĕн юрататпăр, тăшмана хăвăртрах аркатса тăкассишĕн кĕрешетпĕр, Хĕрлĕ Çара мĕнпур вăйран пулăшма тăрăшатпăр. Пирĕн колхоз государствăна тырпул, аш-какай, çăм тата ытти продуктсем тăратмалли обязательствăсене тахçанах тултарчĕ. Колхозниксем хăйсен запасĕсенчен Хĕрлĕ Çарăн тырпул фондне 1.200 пăт тырă хыврĕç. Танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума пирĕн колхозри колхозниксем 111.000 тенкĕ укçа парĕç. Аслă Сталинăн саламĕсемпе тата пирĕн войскăсем фронтăн чылай участокĕсенче ăнăçлăн наступлени туса пынипе хавхаланса, Ярославль, Омск, Алтай облаçĕсенчи комсомолецсенчен пример илсе, эпир халĕ боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» ятлă эскадрильине тума укçа пухма йышăнтăмăр. Эпир çак ĕç валли пĕр кун хушшинче 300.000 тенкĕ пухрăмăр. Самолетсем тума комсомол организацин секретарĕ А. Еливанов — 25.000 тенкĕ, колхоз председателĕ В. Каргин — 25.000 тенкĕ, колхоз бригадирĕсем Е. Кошкинăпа К. Каргина — 10-шар пин тенкĕ, отечественнăй вăрçă инвалидĕсем К. Митрофановпа И. Арланов — 10-шар пин тенкĕ, А. Быков — 5.000 тенкĕ, çамрăк колхозниксем-комсомолецсем А. Плешковпа Л. Кошкин — 10-шар пин тенкĕ, колхоз ферминчи сыснасене пăхакансем Е. Белковăпа А. Иванова — 5-шер пин тенкĕ пачĕç.

Чăваш республикин колхозĕсенчи, предприятийĕсенчи, учрежденийĕсенчи тата шкулĕсенчи комсомолецсемпе çамрăксем! Эпир сире пурне те пирĕнтен пример илсе, боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» ятлă эскадрильине тума хăвăрăн перекетленĕ укçасене пама чĕнетпĕр. Пирĕн укçапа тунă вуншар çĕнĕ машинăсем вилĕм кÿрекен метала тăшманăн пуçĕ çине çĕршер тоннăн пăрахчăр, пирĕн Совет çĕрне фашистла ирсĕрсенчен тасатчăр.

Нимĕç оккупанчĕсене вилĕм!

Сывă пултăр пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр пирĕн тăван çĕршыв, унăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕ!

Сывă пултăр пирĕн çулпуç аслă полководец Сталин юлташ!

Комсомолецсемпе çамрăксен пухăвĕ хушнипе çыру çине çак юлташсем алă пусна: «РОКК» колхозри комсомол организацин секретарĕ **А. Еливанов**, колхоз председателĕ **В. Каргин**, колхоз агрономĕ-комсомолка **М. Пласкина**, колхоз бригадирĕсем **Е. Кошкина**, **К. Каргина**, отечественнăй вăрçă инвалидĕсем **К. Митрофанов**, **И. Арланов**, **А. Быков**, çамрăк колхозниксем-комсомолецсем **Л. Кошкин**, **А Плешков**, **А. Павлов**, фермăри сыснасене пăхакансем **Е. Белкова**, **А. Иванова**.

Республикăри ĕççыннисем танксен колоннисене тума 39.966.000 тенкĕ панă

Ĕççыннисен укçи-тенкипе Хĕрлĕ Çара хĕçпăшаллантарас тĕлĕшпе тăван çĕршыва пуçланнă движени кунсерен вăйланса пырать. Январĕн 1-мĕшĕ тĕлне республикăри ĕççыннисем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 38.198,000 тенкĕ, танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума 1.768.000 тенкĕ пухса укçине Государство банкне хывнă. Ку ĕçре Пăрачкав районĕ малта пырать. Вăл танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 2.823.000 тенкĕ, танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума 160,000 тенкĕ пухнă. Иккĕмĕш вырăнта—Улатăр районĕ. Унта танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 2.760.000 тенкĕ пухнă. Виççĕмĕш вырăнта — Вăрнар районĕ, унта çак ĕç валли 2.069.000 тенкĕ пухнă. Юлашки вăхăтра ку ĕç Канаш, Шупашкар, Çĕмĕрле, Сĕнтĕрвăрри, Калинино районĕсенче те вăйланчĕ. Вĕсенче танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума миллион çуршар е ытларах укçа пухнă.

Анчах Хĕрлĕ Чутай, Шăмăршă, Первомайски, Йĕпреç, Элĕк, Ишлей, Октябрьски тата Куславкка районĕсенче танксен колоннисене тума укçа пухас ĕçе ку таринччен кирлĕ хăвăртлăхпа туса пымаççĕ-ха. Первомайски районра, сăмахран, танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума пĕтĕмпе те 450,000 тенкĕ, танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума 49.000 тенкĕ çеç пухнă. Танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума çавăн пекех Шăмăршă районĕнче 533,000 тенкĕ, Хĕрлĕ Чутай районĕнче — 674,000 тенкĕ çеç пухнă.

Танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума укçа пухас ĕçре Елчĕк МТС-ĕн коллективĕ пĕрремĕш вырăн йышăнать. Унта пурĕ 122.000 тенкĕ пухнă. Ун хыççăн Кувакино, Шăхасан, Пăрачкав, Ишлей МТС-сем пыраççĕ. Вĕсем кашниех çак ĕç валли çĕршер пин тенкĕ е ытларах пухнă.

Çак кунсенче пĕтĕм совет халăхĕ патриотла аслă туйăмпа пурăнать. Республикăри ĕççыннисем хăйсен укçитенкипе Хĕрлĕ Çар валли танксемпе самолетсем тунă çĕре парса, Совет влаçне пĕтĕм чун-чĕререн парăннине, Сталин юлташа юратнине уççăн палăртаççĕ, вĕсем тăшмана çĕнтерес ĕçе хăйсен пĕтĕм вăйне пама хатĕррине кăтартса параççĕ. Юлса пыракан районсен руководителĕсем танксен колоннисене тума укçа пухас ĕçе хăвăртлатма тивĕç. Ку ĕç тавра маосăллă ăнлантару ĕçне сарлакан туса пырса, нимĕç захватчикĕсене хамăр çĕр çинчен хăваласа кăларакан мухтавлă воинсене валли танксен «Колхозник Чувашии» колоннисене тума укçа пухнă çĕре кашни колхозникпа колхозницăна, трактористпа комбайнера хутшăнтармалла!

Танксен „Советский служащий“ ятлă колоннине тума 11.603 тенкĕ пухнă

Пирĕн юратнă çĕршыв мĕнпур вăйхăла ирсĕр тăшмана аркатса пыракан Хĕрлĕ Çара пулăшнă çĕре хурать. Эпир те, Сталин юлташăн доклачĕпе тата приказĕпе хавхаланса, нимĕç захватчикĕсене пĕтерсе тăкма хамăр мĕнпе пулăшма пултаратпăр — çавна шеллесе тăмастпăр.

Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, эпир, ЧАССР Прокуратуринче ĕçлекенсем, хамăр перекетлесе усранă укçана танксен «Советский служащий» ятлă колоннине тунă çĕре паратпăр. Çак ĕç валли эпир пĕр кун хушшинче 11.603 тенкĕ пухрăмăр. Чăваш республикинчи служащисем пирĕн примера хăвăрт йышăнса илĕç тесе шанса тăратпăр.

Г. БЫСТРИЧКИН,
Партбюро секретарĕ.
Г. ФИЛИППОВ,
Местком председателĕ.

Сталин юлташ саламланипе хавхаланса

ВĂРНАР, январĕн 4-мĕшĕ. (Телеграфпа). Зелезвкăри Ленин ячĕпе тăракан колхозăн колхозникĕсемпе колхозницисем, Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ Чăваш республикинчи колхозникĕсемпе трактористсене танксен колоннисене тума укçа пухнăшăн саламланипе хавхаланса, танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума татах 10.000 тенкĕ укçа пухрĕç, Хĕрлĕ Çар фондне килти запасран 500 пăт тырă хыврĕç.

СМИРНОВ,
Колхоз председателĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 3-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Январĕн 3-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Дон** шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра, **Сталинградран** кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăралларахра, **Центральнăй** фронтра тата **Çурçĕр Кавказра** малтанхи еннеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Пирĕн наступлени тăвакан войскăсем, сасартăк пырса çапса, **Моздок** хулипе чугунçул станцине, çавăн пекех тата **Малгобек** хулине тытса илнĕ.

Иртнĕ эрнере, 1942-мĕш çулхи декабрĕн 27-мĕшĕпе 1943-мĕш çулхи январĕн 2-мĕшĕ хушшинче, сывлăшри çапăçусенче тата аэродромсенче нимĕçсен 266 самолетне, çав шутра Сталинград районĕнче — 98 транспортнăй самолетне, пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинче пирĕн 122 самолет пĕтнĕ.

* * *

Январĕн 2-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 10 танкне тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 30 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă, артиллерин 2 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине пĕр ротăна çити çапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем тăшманăн позицийĕсене артиллерирен персе тăнă. Заводсен районĕнче пирĕн штурмлакан отрядсем противникăн укреплениĕсем патне пырса тухнă та вĕсем çине гранатăсем ывăтнă. Тепĕр участокра пирĕн разведчиксем боеприпассен складне тата тăшманăн вуншар дзочĕпе блиндажне сирпĕнтерсе янă. Кун каçа нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн подразделенисем противникăн окопĕсене сасартăк атакăланă та вĕсене йышăнса илнĕ.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăралларахра пирĕн войскăсем, нимĕçсем хирĕç тăнине сирсе ярса, малалла куçса пынă. Противник, питех те пысăк çухатусем тÿснĕскер, çапăçăва ахалех авиачаçсем кĕртсе пырать, çав авиачаçсемпе вăл пехота вырăнне усă курать. Дубовскине тата Тормосина илнĕ чухне совет войскисем 15 склад, çав шутра боеприпассен 9 складне, унтан боеприпассем тиенĕ уйрăм эшелона, пĕр миллион снаряд, 20 миллион патрон, 15 танк, 150 автомашина, саперсен темиçе пин кĕреçине тата ытти тĕрлĕ трофейăсем тытса илнĕ. Кунсăр пуçне, 8.000 пуç мăйракаллă выльăх тытса илнĕ, çав выльăха нимĕçсен фашистла захватчикĕсем хăйсем каялла чакнă чухне мирлĕ халăхран туртса илнĕ пулнă.

* * *

Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра пирĕн войскăсем, малалла куçса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Пĕр участокра совет боецĕсем противникăн тылне пырса тухса, нимĕçсен артиллери батарейине, 10 станковăй пулеметне тытса илнĕ, пĕр танка персе çĕмĕрнĕ тата тăшманăн 300 ытла салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Н-ски мотострелковăй часть, Обливская районĕнче кĕрешекенскер, нимĕçсен каялла чакмалли çулĕсене пÿлсе лартнă, вĕсене чĕрĕ вăй тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тÿстернĕ, нимĕçсен 16 танкне персе çĕмĕрнĕ. Пирĕн тепĕр часть халăх пурăнакан виçĕ пункта тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 100 вилли ытла, персе çĕмĕрнĕ 6 танкĕ, 3 оруди тата 4 автомашина ларса юлнă. Тыткăна лекнĕ нимĕç салтакĕсем хăйсен дивизине Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра нумаях пулмасть Франциран илсе килни çинчен каласа панă.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем Великие Луки хулинчен кăнтăрхĕвеланăçнерехре, противник питĕ вăйлăн хирĕç тăнине сирсе ярса, халăх пурăнакан тĕреклетнĕ пункта тытса илнĕ. Халăх пурăнакан çав пункт патĕнче тата унăн урамĕсенче тăшманăн виллисемпе хĕçпăшалĕсем нумай юлнă.

Ржевран хĕвеланăçнерехри районра противникăн пехоти, 12 танк хÿтĕлесе пынипе, Михайлов юлташăн подразделенийĕ хÿтĕлекен участока хирĕç контратака тунă. Çапăçура нимĕçсене 6 танк пĕтерсе тăкнă, противника хăйĕн малтанхи позицийĕсем патне тăваласа янă.

* * *

Çурçĕр-Кавказра пирĕн чаçсем, противникпа çапăçса, нимĕçсене халăх пурăнакан темиçе пунктран хĕссе кăларнă. Çав çапăçусенче нимĕçсен 500 салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ, 7 танкне çунтарса янă, 9 танкне персе çĕмĕрнĕ, 21 противотанковăй орудине, 103 огневой точкине, 13 автомашинине тата ултă кĕпçеллĕ 3 минометне пĕтерсе тăкнă. 15 оруди, 15 пулемет тата алăра тытмалли хĕçпăшалсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Нимĕç командованийĕ совет войскисем Великие Луки хулине илнине тунать. Гитлерăн главнăй ставкин январĕн 2-мĕшĕнче пĕлтернĕ сводкинче çапла калан: «Великие Луки опорнăй пунктĕнчи гарнизон, вăйлăн хирĕç тăрса, советсен умлăн-хыçлăн туса пыракан атакисене сирсе янă», тенĕ.

Великие Луки хулара нимĕç гарнизонĕ халь вăйлăн та, вăйсăр та хирĕç тăмасть. Виçĕ кун ĕнтĕ çав совет хулинче хĕçпăшаллă пĕр нимĕç те тăрса юлман. Парăнма килĕшмен нимĕç гарнизонне пĕтĕмпех вĕлерсе пĕтернĕ. Великие Луки хулине йышăнса илнĕ пирĕн войскăсем, малтанлăха шутланă тăрăх, 17 танк, 47 оруди, минометсем нумай (вĕсенчен 33-шĕ ултă кĕпçеллĕ минометсем), 136 пулемет, 400 автомашина, 42 радиостанци, стрелковăй хĕçпăшал нумай, боеприпассен, продовольствин, инженерла тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсен склачĕсене тытса илнĕ. Трофейăсене шута илсе пыраççĕ. Ыттисем пĕлмесен те, Германи командованийĕ çакна пĕлетех ĕнтĕ. Анчах гитлерла ставкăри шарлатансем Великие Луки районĕнчи нимĕç гарнизонĕн кунçулĕ çинчен тĕрĕссине каламаççĕ. Гитлеровецсем çакăнтан хăраççĕ: Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра çавăрса илнĕ нимĕç гарнизонĕсенчи тата опорнăй пункчĕсенчи салтаксем Великие Луки хулинче мĕн пулнине шута илĕç те сынсиен Гитлершăн урăх вилме килĕшмĕç.

Великие Луки çинчен суя хаяпасем ярса, гитлеровецсем хăйсене пĕтĕм тĕнче умĕнче тепĕр хут пĕр вăтанмасăр суякансем пек кăтартрĕç. Гитлерла главнăй ставкăн пĕлтерĕвĕсен пĕр сăмахне те ĕненме юрамасть. Çав пĕлтерÿсем вĕсем нимĕ те тăмаççĕ.

Январĕн 4-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Январĕн 4-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем **Дон** шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра, **Сталинградран** кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăралларахра, **Центральнăй** фронтра тата **Çурçĕр Кавказра** ĕлĕкхи еннеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче штурмлакан пĕчĕк отрядсем тата уйрăм боецсем противник вырнаçнă тĕле кĕре-кĕре кайнă та гранатăсем ывăтса нимĕçсене çуртсенчен тата блиндажсенчен çапса кăларнă. Çĕр каçа нимĕçсен 100 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ. Пĕр танка персе çĕмĕрнĕ, 3 дзота тата 18 блиндажа ишĕлтерсе антарнă. Ытти участоксенче пирĕн подразделенисем разведка тунă тата тăшманăн позицийĕсем çине персе тăнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăралларахра пирĕн войскăсем наступлени туса пынă. Противник хирĕç тăнине сирсе ярса, совет чаçĕсем унăн оборонни ăшне кĕре-кĕре каяççĕ. Пирĕн мотопехотăпа танксем уйрăмăнах ăнăçлăн çапăçаççĕ. Пĕр участокра противник «СС» дивизийĕн икĕ полкне çапăçăва кĕртсе янă. Анчах та вĕсем совет войскисен хĕсинне чарма пултарайман. Пирĕн боецсем çĕрлехи çапăçусенче нимĕçсене хĕстернĕ тата вĕсене йывăр çухатусем кÿнĕ. Ытти участоксенче пирĕн чаçсем, малалла куçса пырса, нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен халăх пурăнакан темиçе пункта ирĕке кăларнă.

* * *

Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă тата халăх пурăнакан чылай пунктсене йышăнса илнĕ. Танковăй гвардейски часть сасартăк пырса çапса тăшманăн оборонин çирĕплетнĕ линине татнă тата халăх пурăнакан виçĕ пункта йышăнса илнĕ. Противникăн аркатса тăкнă гарнизонĕсен юлашкийĕсем ним йĕркесĕр каялла чакнă. Пирĕн войскăсен аллине трофейăсем лекнĕ. Тепĕр участокра Н-ски стрелковăй часть 100 гитлеровеца çити вĕлернĕ, 8 оруди, çав шутра хăй тĕллĕн çÿрекен 2 оруди, 2 танкетка, 13 противотанковăй пăшал тата 2 радиостанци туртса илнĕ.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă, вĕсен пĕр пайĕ хăйсем йышăннă рубежсене çирĕплетнĕ. Дьяконов юлташ ертсе пыракан боецсем малалла куçса

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 4-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

противникăн темиçе опорлă пунктне пĕтерсе тăкнă. Çавăнпа кÿршĕллĕ участокра Ларцев командир ертсе пыракан часть противникăн хаяр атакине сирсе янă тата нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ.

Ржевран хĕвеланăçнерехри районра пирĕн войскăсем вырăнти çапăçусем туса пынă.

* * *

Моздока йышăнса илнĕ хыççăн пирĕн войскăсем, противника çурçĕр-хĕвеланăçнелле хăваласа пырса, нимĕç захватчикĕсенчен халăх пурăнакан темиçе пункта ирĕке кăларнă. Тăшман пысăк сухатусем тÿсет. Пĕр участокра нимĕçсен 700 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем çĕрле йышăнса илнĕ станцишĕн пынă çапăçура нимĕçсен 8 танкне персе çĕмĕрнĕ, 4 оруди, 8 автомашина тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Крымра кĕрешекен партизансен отрячĕ румынсен 70 çынна çити шутланакан салтакĕсен ушкăнне сасартăк тапăннă. Совет патриочĕсем 14 румына вĕлернĕ, ыттисем тарса пĕтнĕ. Çак отрядăн темиçе партизанĕ нимĕçсен зенитнăй орудийĕсен точнăй приборĕсем валли запаслă пайсем турттарса пыракан автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Машинăна ăсатакан салтаксене вĕлернĕ. Крымри тепĕр отрядăн партизанĕсем халăх пурăнакан пĕр пунктри нимĕçсен заставине тапăннă та нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре словаксен моторизованнăй дивизийĕн «Давид» ятлă полкĕнчен Хĕрлĕ Çар енне куçнă салтак çапла каласа панă: «Нумаях пулмасть «Давид» ятлă полкăн иккĕмĕш роти малти позицисене кайма килĕшмен. Рота командирĕн помощникĕ подпоручик Реперский салтаксене речĕпе тăратса тухнă та, пысăк хут листи илсе, кашнине çав хут çине хăй çапăçма килĕшни-килĕшменни çинчен çырса хума хушнă. Хăш-пĕр салтаксем хăйсем фронта кайма килĕшменни çинчен çырнă. Подпоручик çав хута штаба илсе кайнă. Пĕр сехетрен пирĕн пата батальон командирĕ Зверин подполковник тата полк командирĕ Туранец полковник пычĕç, вĕсемпе пĕрле 6 нимĕç пычĕç. Ротăна речĕпе тăратса тухсан, нимĕçсем кашни вуннăмĕш çынна мала кăларчĕç те строй умĕнче персе вĕлерчĕç. Гордуш, Депеш тата ытти салтаксене те персе вĕлерчĕç».

* * *

Югославири партизансем Благай—Мартин—Брдо районĕнче оккупантсемпе çапăçса 160 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. 100 винтовка, 8 пулемет тата боеприпассем тытса илнĕ. Костайниц—Сунья районĕнче партизансем Маяр ятлă чугунçул станцине тытса илнĕ. Нимĕçсен 60 салтакне тыткăна илнĕ. Пĕр станцире партизансем Югославире ирĕксĕр мобилизацилесе Германие ĕçлеме илсе каякан 800 рабочие лартса пыракан поезда тытса чарнă. Партизансем рабочисене пурне те килĕсене янă, вĕсене хуралласа пыракан нимĕç хуралне тыткăна илнĕ.

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем малалла куçса пыраççĕ. Гитлеровецсем питĕ хытă хирĕç тăраççĕ, вĕсем пирĕн войскăсенчен татăлса каялла кайса ÿксе, меллĕ рубежсенче тĕреклĕнсе ларма пултарнă чухне уйрăмах вăйлăн хирĕç тăраççĕ. Çапăçусем çăртлă-туллă, çырмаллă-çатраллă вырăнсенче пыраççĕ. Совет боецĕсен искусственнăй тата естественнăй йышлă чăрмавсене çĕнтерме тивет. Анчах çапах та противник наступлени тăвакан совет чаçĕсене тытса чарма хăтланнисем пăчланса лараççĕ. Пирĕн боецсем тăшманăн оборонине çĕмĕрсе, тăшмана пысăк çухатусем тÿстереççĕ.

Тусем хушшинчи пĕр çул çинче нимĕçсем халăх пурăнакан виçĕ пункта хирĕç тăмалли хăватлă узел туса хунă. Рубанюк ертсе пыракан боецсем тăшманăн оборонине татса кĕнĕ те халăх пурăнакан пунктăн урамĕсенче çапăçаççĕ. Тулличмар даннăйсем тăрăх, унта 200 гитлеровеца ытла вĕлернĕ. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ. Танкистсем противникăн сисĕнтермеллех пыра-пыра çапаççĕ. Бурляшкинăн танк экипажĕ çĕрле нимĕç оборони ăшне кĕрсе кайнă. Гитлеровецсем хушшинче паника пуçланса кайнă. Танк экипажĕ пулеметпа персе тата гусеницăсемпе таптаса нумай фашиста пĕтерсе тăкнă. Унтан, противник аптраса кайнипе усă курса, пирĕн пехота танкистсем пуçласа янă ĕçе ăнăçлăн вĕçленĕ, вăл тăшманăн гарнизонне халăх пурăнакан çав пунктран хĕссе кăларнă.

Пĕр высотăшăн пынă çапăçура Якунин лейтенантăн танкĕ 15 фашиста тата пĕр противотанковăй туппа пĕтерсе тăкнă. Шамрай сержант боецсен пĕр ушкăнĕпе пĕрле тăшманăн 2 дзотне çаварса илнĕ. Вĕсенче ларнă гитлеровецсене гранатăсемпе вĕлерсе пĕтернĕ. Тăшманăн вут-çулăмĕ çакăн хыççăн сасартăк чакнă та, пирĕн подразделени вара унпа усă курса малалла ыткăннă. Нимĕçсем васкаса каялла чакма пуçланă, анчах та вĕсем пирĕн пулеметсемпе минометсен вут-çулăмĕ айне пулнă. Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен йышлă виллисем выртса юлнă.

Тепĕр тĕлте тăшманăн пулемечĕ пирĕн подразделение малалла кайма кансĕрленĕ. Кĕçĕн лейтенант Мозговой противникăн флангне кайса, тухнă та, ручной пулеметран пĕр черет персе ярса, фашистла пулеметчиксене вĕлерсе пĕтернĕ. Унтан пирĕн боецсем, хăйсен командирĕн чаплă ĕçĕпе хавхаланса, атакăна вăркăннă та нимĕçсене хăйсен рубежĕсенчен хăваласа янă.

Халăх пурăнакан пĕр пункта ирĕке кăларсан, красноармеецсем унта 8 казак-гвардеецăн паллайми туса хунă виллисене тупнă. Гвардеецсен ÿчĕсем çинче тискеррĕн асаплантарнă йĕрсем тата çĕçĕпе, штыкпа чиксе тунă сурансем пур. Халăх пурăнакан тепĕр пунктра Н-ски чаçăн боецĕсем красноармеец-разведчикăн Андрей Барановăн виллине тупнă. Гитлерла ирсĕрсем Барановăн хăлхисене, сăмсине каснă, çамки çинче пилĕк кĕтеслĕ çăлтăр касса кăларнă. Çуртсен ишĕлчĕкĕсем айĕнче фашистсем тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ красноармеецсен 4 виллине тупнă. Фашистсем вĕсен хăлхисене касса татнă, куçĕсене чиксе шăтарнă, алли-урисене пĕçертнĕ.

Дзуарикау ялĕнче нимĕçсем пĕр старике — хресчене арестленĕ те ăна красноармеецсемпе çыхăну тытатăн тесе айăпланă. Старике нумайччен асаплантарнă, мăшкăлланă, унтан ăна çав вырăнта ятарласа пухнă çынсем умĕнче персе вĕлернĕ. Персе вĕлернĕ хыççăн гитлеровецсем çав ялти хĕрсене хăйсен аллипе виле шăтăкĕ чавма хушнă. Хĕрсем шăннă çĕре темиçе сехет хушши çара аллăпах чаваланă. Çав ялтан чакса кайнă чухне нимĕçсем хресченсен мĕнпур выльăх-чĕрлĕхĕсене хăваласа кайнă, кайăк-кĕшĕксене пусса пĕтернĕ, пур çуртсенче те кăмакасене гранатăсемпе ишĕлтернĕ, чÿречесене кăларса ывăтнă, алăксене çĕмĕрсе пĕтернĕ.

Г. ОШАРОВСКИЙ.

Пирĕн землянсем

Виçĕ тус—виçĕ тантăш

Эпир вăрçăччен нумай çынсене пĕлмен. Вĕсенчен хĕшпĕрисем халĕ çĕршывĕпех мухтавлă çынсем пулса тăчĕç. Ача чух кĕтÿ кĕтнĕ-и, ыйткаласа çÿрenĕ-и, е колхозра ĕçленĕ-и,—пур-пĕрех, вĕсем халĕ хăйсен тăван çĕршывĕ умĕнчи, халăх умĕнчи тивĕçĕсене тÿрремĕн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Хаяр халăх: — нимĕç оккупанчĕсене вилĕм! тесе каларĕ. Эпир паян нимĕç оккупанчĕсене пĕтерсе пырас ĕçре хăюлăх кăтартакан çынсен вăрăм списокĕ çинчен хамăрăн туссене, тăвансене тупатпăр.

Çав списока кĕрешÿ çулăмĕнче çырса пыраççĕ. Вара унти çынсен ячĕсене халăх ĕмĕртен-ĕмĕре асăнса пурăнĕ. Нумай çулсем иртсен, летописецсем халĕ тухакан хаçатсен подшивкисене уçкаласа пăхĕç те çав вилĕмсĕр çынсем çинчен халăха каласа кăтартĕç. Юрă легендăсем çине вĕсен ячĕсене хурса, этемлĕх çĕнтерÿ симфонине шăрать.

Чаплă çынсем, Тÿрех калас пулать: вĕсем пирĕн ăрăвăн шăпине татса паракансенчен пĕрисем. Эпир хамăр тăвансен кĕрешÿри ĕçĕсем çинчен çĕнĕрен-çĕнĕ хыпарсем пĕлсе пыратпăр. Халь çеç пĕр подразделенире виçĕ ваш ачи—виçĕ тантăш пурăнни çинчен пĕлтĕмĕр. Виçĕ тус—виççĕшĕ те Советски районран. Ячĕсене вулатпăр: Борис Иванов (Лешкас-Асламасран), Димитрий Алексеев (Вăрманкас-Асламасран), Константин Михайлов (Мăн Чурашран). Вĕсем инçетри вăрçă фронтĕнче командованирен темиçе хут та благодарность илнĕ.

Виçĕ тус-виçĕ тантăш... Вĕсен туслăхне нимĕнле усал тăшман та пăсайрас çук. Б. Иванов Хĕрлĕ Çара кайсан боец пулнă пулсан, халĕ сержант званине илнĕ тата отделени командирĕ. Кăкăрĕ çинче çуталакан «За боевые заслуги» медаль унăн хăюллă ĕçĕ çинчен пĕлтерет. Д. Алексеевăн ятне «Герои-связисты Н-ской ударной Армии» кĕнеке çине çырнă, часть командирĕ тата подразделени командирĕпе взвод командирĕ унăн ятне уйрăмăнах чысласа палăртнă, «За Родину» хаçат çинче час-часах çырнă. К. Михайловăн ячĕ те подразделенире пысăк чыслăхпа çÿрет.

Я. СИГАЙ.

Вырăнти удобренисене хатĕрлесе турттармалли уйăхлăх

Тырпул тухăçлăхĕшĕн кĕрешме хĕлле тытăнас пулать

Удобренисем хатĕрлесе турттармалли уйăхлăха активлăн хутшăнчĕç

ТАВАЙ, январĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем 1943 çулта акмалли тырпулсен участокĕсем валли удобренисем хатĕрлесе турттармалли уйăхлăха активлăн хутшăнчĕç. Чутейри «Сталь» колхозра вырăнти удобренисем пухса хатĕрлес ĕçре уйрăмах комсомолецсемпе çамрăксем активлăн ĕçлеççĕ. Çамрăксен вăйĕпе юлашки 3—4 кун хушшинче уя 600 лав тислĕк кăларнă, 20 центнер кĕл, 16 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă.

Вырăнти удобренисем пухса уя турттарас ĕç Çĕнĕ Тăрмăшри «8-ое марта» колхозра лайăх пырать. Уйăхлăх пуçланнăранпа колхозниксем 45 центнер кĕл, 17 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрлерĕç, уя 300 лав тислĕк кăларчĕç. «8-ое марта» колхозăн членĕсем 1943 çулхи çуракине тĕплĕн хатĕрленсе тухма тăрăшаççĕ. Паянхи куна вĕсем çуракинче ĕçлемелли пур машинăсемпе ĕç хатĕрĕсене те юсаса çитернĕ, пăрçа йышши культурăсен вăрлăхĕсене 31 центнер алăпа суйласа тасатнă.

В. ИЛЬИН.

„Марс“ колхозăн примерĕ

ЕЛЧĔК, январĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Вырăнти удобренисене хатĕрлесе уя кăлармалли уйăхлăха районри нумай колхозсем активлăн хутшăнчĕç. Вăйлă тырпул туса илесси хамăрăн уйхирсене удобрени нумайрах хунинчен килет. Районри малта пыракан колхозсем çакна тĕплĕн ăнланса ĕçлеççĕ. Кĕркуннеренпе декабрĕн 31-мĕшне çитиччен «Марс» колхоз хăйĕн уйхирĕсене 2.450 лав тислĕк кăларнă.

Халĕ, вырăнти удобренисене уя кăлармалли уйăхлăха кĕнĕ хыççăн, «Марс» колхоз уя тислĕк кăларса тăма колхозниксенчен уйрăм бригада организацилерĕ. Бригада виçĕ кун хушшинче уя 360 лав тислĕк кăларчĕ. Çавăн пекех Крупская ячĕпе тăракан колхоз членĕсем те юлашки виçĕ кун хушшинче уя 280 лав тислĕк кăларчĕç.

Уя кăларнă тислĕке «Марс» колхоз 100—120-шер лавлă купасем туса пусарса хурать. Тислĕк çуркуннеччен çĕрет, тырпула ÿсме кирлĕ питех те паха удобрени пулса тăрать.

П. ЩИПЦОВ,
Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

Комсомолецсем çуракине хатĕрленме пулăшаççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Яндаш ялсоветĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз çуракине хĕрсех хатĕрленет. Ку ĕçре ăна комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем активлăн пулăшаççĕ. Вырăнти удобренисем хатĕрлесе турттарас тĕлĕшпе январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа февралĕн 1-мĕшне çитиччен пыракан уйăхлăха хутшăнса, комсомолецсем вырăнти удобренисем хатĕрлес ĕçе вăйлатрĕç. Комсомолец Н. Алексеев юлташ кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пĕр тонна пуçтарса пачĕ. Çавăн пекех Васильевпа Логинов юлташсем те 990 килограмм кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 10 центнер кĕл пухса пачĕç.

Комсомолецсем уя тислĕк турттарма çĕрте хастарлăн ĕçлеççĕ. Вĕсем паянхи кун тĕлне хăйсен вăйĕпе пурĕ 300 лав тислĕк, 200 лав торф уя турттарса кăларнă.

Н. КОНСТАНТИНОВ.

Çуракине хатĕрленеççĕ

СОВЕТСКОЕ. Исмендерти «Радио» колхоз кăçалхи ялхуçалăх çулне лайăх вĕçлерĕ. Кунти колхозниксем мĕнпур культурăсене вăхăтра çапса пуçтарчĕç тата государство умĕнчи обязательствăсене срокченех парса татрĕç. Колхоз агротехникăллă мероприятисене вăхăтра пурнăçласа пычĕ. Çавна пула тырпул тухăçлăхĕ те пысăк пулчĕ. Сĕмахран, 2-мĕш бригада пăрçана кашни гектар çинчен 17,5 центнер вырса илчĕ.

Халĕ колхоз 1943 çулхи тухăçлă тырпулăн никĕсне хатĕрлес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеме тытăнчĕ. «Радио» колхоз вăрлăх фондне кĕркуннех хывса хăварнă, пур йышши культурăсене те ун чухне триерпа сортировка витĕр кăларнă. Колхозăн акмалли вăрлăх ытлашшипех пур, вĕсем кондициллĕ.

Вырăнти удобренисем хатĕрлес ĕçе колхозра хĕрÿллĕн тытăннă. Халь çеç 90 пăт ытла кĕл пухрĕç, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, фекали хатĕрлеççĕ. Хирсенче тислĕкпе торф кăлармалли вырăнсене палăртса хунă. Кунпа пĕрлех юр тытса хăварас ĕçе те пуçăнчĕç. Малтанласа 40 гектар çинче тытса хăварнă.

Лаша тавраш ĕсене юсанă, çитменнисене сутăн илнĕ. Халĕ вĕсем кашни лаша валлиех çителĕклĕ. Плуг-сÿресем, сеялкăсем хатĕр тата типĕ вырăнсенче лараççĕ. Халĕ пăявсем, вĕренсем хатĕрлеççĕ.

Кусем малтан тунă ĕçсем кăна-ха. Колхозниксем хăйсем умне хĕлле тумалли агротехникăллă мероприятисене пĕтĕмпех пурнăçлас задача лартнă. Вĕсене пурнăçласа вăйлă тырпул туса илес тесе колхозниксем кашни кунхи вăхăтпа туллин усă курса ĕçлеççĕ.

Я. СИГАЙ.

Хĕрарăмсен бригади малта

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Машинно-тракторнăй станцинче тракторсене юсас ĕç хăвăрт пулса пырать. Ремонт тăвакан бригадăсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

МТС-ăн ремонт тăвакан мастерскойĕнчен капитальнăй ремонтран вуннăмĕш трактор юсанса тухрĕ. Çапла, МТС тракторсене юсас тĕлĕшпе 1942 çулăн IV-мĕш квартал планне иртт ерсе тултарчĕ. Капитальнăй ремонтпа 10 трактор, текуши ремонтпа 8 трактор, техникăллă сăнав витĕр 6 трактора юсаса кăларнă.

1942 çулăн IV-мĕш кварталĕнче МТС-ра тракторсен запасной чаçĕсене 3.005 тенкĕлĕх юсанă, 994 тенкĕлĕх çĕнĕрен тунă. Тракторсене юсас ĕçре трактористкăсен бригади паха тĕслĕхсемпе ĕçлет. Бригадăна трактористка Ульяна Николаева ертсе пырать. Тăваттăмĕш кварталта унăн бригади 8 трактора юсарĕ, тракторсене юсамалли квартал планне 150 процент пурнăçларĕ.

Р. ВАСИЛЬЕВА.

Медсестрасем хатĕрлес ĕçе вăрçă вăхăчĕ хушнă пек туса пымалла

Пирĕн медицина работникĕсем аманнă боецсен пурнăçне сыхласа хăварассишĕн кĕрешеççĕ. Вĕсем паттăр фронтовиксемпе çумма-çуммăн тăрса çапăçнă вăхăтрах, аманнă боецсене вăрçă хирĕнчен çăлса кăларса, пирвайхи пулăшу параççĕ.

Медсестрасем çапăçу хирĕнче аманнă боецсене пирвайхи пулăшу пама çеç мар, тылри санитари ĕçне те халăх ыйтнă пек туса пыма тивĕçлĕ. Çавăнпа та медицина кадрĕсене хатĕрлесси хальхи вăхăтра питех те кирлĕ ĕç пулса тăрать. Вăрçă пуçланнăранпа пирĕн республикăра Хĕрлĕ Хĕрес обществи енĕпе медсестрасем пин çын ытла хатĕрленĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕсем фронтра аманнă боецсен пурнăçне çăлассишĕн, ыттисем тылра вĕсене сыватассишĕн ĕçлеççĕ.

Хĕрлĕ Хĕрес комитечĕсем медсестрасен вĕренÿ пахалăхĕпе те интересленме тивĕçлĕ. Хăшпĕр районсенче медицина кадрĕсене хатĕрлекен курссем ĕçлеççĕ, анчах унта вĕренекенсем пурте çÿремеççĕ. Етĕрне районĕнче, сăмахран, малтанхи вăхăтра вĕренекенсенчен 80 проценчĕ, декабрь уйăхĕнче 40 проценчĕ çеç çÿрерĕ. Улатăр районĕнче те вĕренме çÿрекенсен хисепĕ 45 процентран ытла мар. Апла пулин те çак районсенчи РОКК комитечĕсем вĕренекенсен хушшинче дисциплинăна çирĕплетессишĕн тăрăшмаççĕ.

Чылай районсенче медсестрасен вĕренĕвне практикăпа çыхăнтармаççĕ, вĕренекенсене практикăра вĕрентмесĕрех медсестра ятне параççĕ. Çав вăхăтрах вĕсене ĕçе хăнăхтармалли майсем пирĕн нумай. Госпиталь, больница, клиника, сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен ытти учрежденисем — медсестрасене ĕçе вĕрентмелли лайăх шкулсем пулса тăраççĕ. Унпа пĕрлех тата çĕнĕрен ĕçлеме пуçланă сестрасене опытлă медработницăсем таран вĕрентсе ÿстерес пулать.

Медсестрасене практикăна çÿретес ĕçре учрежденисемпе организацисен руководителĕсенчен килекен чăрмавсем те пур-ха. Хăшпĕр руководительсем медсестрасене ĕç вăхăчĕ тесе практикăна ямасăр тăраççĕ. РОКК райкомĕсен çак çитменлĕхсене пĕтерме пулăшас пулать; практика вăхăтĕнче курсантăсене ĕçрен хăтарни, е каçхи сменăна куçарни кирлĕ.

Сталин юлташ пирĕн çĕршывра фронта кирлĕ резервсене хатĕрлес ĕçе пĕр минутăлăха та сÿрĕклетмелле мар тесе кăтартса пачĕ. Çулпуçăн çак кăтартăвне Хĕрлĕ Хĕрес райкомĕсен ялахах асра тытмалла. РОКК обществин работникĕсен Хĕрлĕ Çар валли медицинăна санитари кадрĕсене çителĕклĕ таран хатĕрлесе памалла.

П. ИВАНОВ.
ВКП(б) Обкомĕн çарĕç отделĕн инструкторĕ.

Ют çĕршывсенче



АМЕРИКАРИ ПĔРЛЕШÜЛЛĔ ШТАТСЕН СЫВЛĂШ-ÇАР ФЛОЧĔ. Укерчĕкре çинче: «Либерейтор» йышши бомбардировщик. Унăн çуначĕсем çинче пĕр ĕрет тăрса 80 çын ытла вырнаçать.

Де Голль çитес вăхăтра Жиро генералпа курнăçса калаçасси çинчен пĕлтерни

ЛОНДОН, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Кĕрешекен Францин главнăй штабĕ де Голль генералăн заявленине пичетлесе кăларнă. Çав заявленире çапла каланă: Францин Çурçĕр Африкинче тата Францин Хĕвеланăç Африкинче çынсем пăтранасси ÿссе пырать, çакă вăл çав çĕрсенчи француз влаçĕсем çирĕп никĕс çинче тăман пирки пулса пырать, нацин кĕрешекен Франци тавра пĕрлешнĕ тĕп вăйĕсен, тĕнĕл держависене хирĕç вăрçă пуçланă-скерсен тата Франци владенийĕсенче нумайĕшĕнче республика влаçĕ туса хунăскерсен, çыннисем Франци Африкинчи власть оргăнĕсенче пĕр çын та çук. Çапла пăтранса тăни союзниксен армийĕсен операцийĕсемпĕн сиенлĕ. Метрополире тăшмана хирĕç тăрса Францин мĕнпур владенийĕсене пĕрлештерни Франци аллинче кĕрешĕвĕн питĕ хăватлă орудийĕ пулса тăнă пулĕччĕ, анчах халь çак оруди çук-ха. Лару-тăрăва Францин Çурçĕр Африкинче, Хĕвеланăç Африкинче тата мĕнпур ытти владенийĕсенче вăхăтлăх власть тунипе лайăхлатма пулать; çак власть вăл нацие пĕрлештерме пултарнă пулĕччĕ тата француз халăхĕ хăйĕн ирĕкне палăртма пултарас вăхăтчен республикăн законĕсене пурнăçа кĕртсе пынă пулĕччĕ.

«Çавăнпа та, — тенĕ де Голлĕн заявленийĕнче, — кĕрешекен Францин наци комитечĕ килĕшнипе эпĕ декабрĕн 25-мĕшĕнче Жиро генерала Францин территорийĕнче манпа халех тĕл пулса çав кăтартнă тĕллевсене пурнăçа кĕртмелли майсем çинчен сÿтсеявма сĕнтĕм. Эпĕ çапла шутлатăп: Францин хальхи лару-тăрăвĕ тата вăрçăри пĕтĕмĕшле лару-тăру çак ĕçе кая хăварма хушмаççĕ».

Гитлеровецсем оккупациленĕ çĕршывсенче пурнăç начарлансах пырать

НОРВЕГИЯ

СТОКГОЛЬМ, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Норвегин экономикăллă лару-тăрăвĕ çаплах начарланса пырать. Швецири хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, выльăх апачĕ çитмен пирки тата нимĕçсем улăма пухса илсе кайнă пирки Норвегире кăçал çуркунне выльăх хисепĕ тата 15 процент чакнă. Нимĕçсем кĕркуннех выльăха обязательнăй йĕркепе пусса какайне оккупациллĕ войскăсене пама хушса приказ кăларнă. Çав приказ тăрăх Норвегири выльăхăн виççĕмĕш пайне яхăн пусмалла пулать.

Продовольстви запасĕсем пĕтĕмпе тенĕ пекех пĕтсе ларнă. Выçлăх пирки чирлекенсен хисепĕ ÿссе пырать. «Афтонтиднинген» хаçат Норвегире дифтерит питĕ сарăлса кайни çинчен пĕлтерет.

Выçлăхпа асапсем пирки Норвеги халăхĕ гитлеровецсене ытларах та ытларах кураймасть. Германи оккупанчĕсем Норвеги халăхĕ хирĕç тăнине вăйпа пĕтерсе лартма тăрăшаççĕ.

Норвегири тĕрмесенче ларакан çынсен пурнăçĕ питех те начар. Гринири концентрациллĕ лагерьте 1.800 çынна яхăн пурăнать. Вĕсем выçăпа аптăраççĕ.

ЛОНДОН, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Норвегири телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Норвегири хуласенче Гитлера хирĕçле движени сарăлса пырать. Тронхеймра нимĕçсен плакачĕсемпе пĕлтерĕвĕсене сÿсе илсе вĕсем вырăнне час-часах оккупантсемпе кĕрешме чĕнекен плакатсем çыпăçтарса хураççĕ.

Гвислинговецсем хăйсен партийĕнчен туха пуçларĕç. Вĕсем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта мобилизацилесрен хăтăлса юлас шутпа партирен тухаççĕ.

ГОЛЛАНДИЯ

ЛОНДОН, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Голландин Лондонра тухакан хаçачĕ «Войс оф Недерланд» çапла пĕлтерет: оккупациллĕ влаçсем Голланди халăхне тинĕс çумĕнчи районсенче çуртсенчен пĕр шеллемесĕр кăлара-кăлара яраççĕ, кăларса яракансене хăйсен япалисене илме ирĕк памаççĕ. Католик священникĕсене те нумайĕшне ытти çĕре куçарнă.

ФРАНЦИЯ

ЛОНДОН, декабрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Кĕрешекен Францин руководителĕсем илнĕ хыпарсем тăрăх, нимĕçсем Францин наци библиотекине тустараççĕ. Вĕсем питех те паха пулса тăракан историллĕ документсене 6 ещĕк тултарса илсе кайнă, çав шутра Мария Антуанетăн, 14-мĕш Людовикăн çырăвĕсене тата ытти историллĕ паха документсене те илсе кайнă.

Лориантра квалификациллĕ 200-рабочие ирĕксĕр Германие ĕçлеме янă пирки Гитлера хирĕçле демонстраци пулса иртнĕ, çав демонстрацие 15 пин çынна яхăн хутшăннă. Каякан рабочисене çынсен пысăк ушкăнĕ ăсатнă. Çакăн пек кăшкăрни илтĕннĕ: «Гитлер тĕп пултăр!», «Нимĕçсене вилĕм!», «Лавале виселица çине!», «Петэн тĕп пултăр!», «Сывă пултăр де Голль!» Демонстрантсем французсен гимне «Марсельезăна» юрланă.

Югослави правительствин çĕнĕ составĕ

ЛОНДОН, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Югославин çĕнĕ правительствине тунă, ун пуçĕнче Иованович тăрать; Иованович вăл отставкăна тухнă кабинетра премьер-министр пулнă. Иовановичăн хăй çине тата ют çĕршывсен ĕçĕсен министрĕн тата шалти ĕçсен министрĕн ĕçĕсене илнĕ.

Англипе Германи хушшинчи сывлăшри вăрçă

ЛОНДОН, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: январĕн 1-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Хĕвеланăç Германири объектсене тапăннă. Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 31-мĕшĕнче ирхине противникăн самолечĕсем Англин хĕвелтухăç пайĕнчи пĕр пункт çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăртак сиен кÿнĕ.

Декабрĕн 31-мĕшĕнче «Москит» йышши бомбардировщиксем Франципе Бельгири чугунçулсене атакăланă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Гострсту требуются для работы в городе: каменщики, плотники, столяры, штукатуры, маляры, подсобники и ученики по этим специальностям.

Общежитием и столовой обеспечиваются. Обращаться по адресу: г. Чебоксары, Дом печати, 2-ой этаж, комн. 17.

ОТДЕЛ КАДРОВ.

ДКА требуются уборщица и маркер в биллиардную.

ЧебтоРгу требуются счетоводы-картотетчики и бухгалтера.

2—1

Наркомпросу Чувашской АССР срочно требуются: бухгалтер-ревизор, экономист-плановик, кассир.

Жилплощадь предоставляется. Адрес: Чернышевская, 6.

26 декабря 1942 года с кузницы мехпарка пропала лошадь, принадлежащая Чебоксарскому Мелькомбинату. Приметы: темно-серой масти, ниже среднего роста, возраст 4-х лет. Знающих ее местонахождение просим сообщить по адресу: Чебоксары, ул. Урицкого, д. № 15. Телефон 2—16.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 3—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 002 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 58 84 п.